К84.09 (=чув)
К56
ч-40620



Лидия Ковалюк

# ЮРАТУ ÇĂЛКУÇĔ

Национальная библиотека ЧР
4-040620

К ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР К 56

Лидия Ковалюк

# ЮРАТУ ҪĂЛКУҪĔ

Сăвăсем

кр

Шупашкар
2002

УДК 821.512.111
ББК 84 /2 Рос-Чув/-5
К56

**Ковалюк Л.А.**

К56 **Юрату çăлкуçĕ.** Сăвăсем. Шупашкар: «Калем» кĕнеке изд-ви, 2002. – 72 с.

Лидия Ковалюк пултаруллă çыравçă. Унăн халиччен «Ырă кун», «Тавах, ачам», «Çурхи вăй» тата «Шурă акăш» кĕнекисем пичетленсе тухнă.

Вăл хăйĕн сăввисенче паянхи ырă çыннăн ĕçĕ-хĕлне, ĕмĕт-шухăшне, чĕререн шăранса тухакан юрату туйăмне витĕмлĕ кăтартса парать.

Сăвăç сăнарлă çырать, сăввисен янравĕ хăйне-евĕрлĕ.

Ч-40620
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКА
ПР
05 ИЮЛ 2017

© «Калем» издательство

## ХАЛĂХРА ЯНĂРАКАН СĂВĂСЕМ

Лидия Алексеевна Ковалюк-Антипова Патăръел районĕнчи Алманчă ялĕнче çуралнă. Вăл Алманчăри вăтам шкулта вĕреннĕ, Чăваш Патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Л.Ковалюк Патăръел районĕнчи ВЛКСМ райкомĕнче шкул пайĕн заведующийĕнче ĕçленĕ, çичĕ çула яхăн республикăри шкулсенче ачасене чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ, çичĕ çула яхăн хулари çамрăксен общежитийĕнче воспитательте тăрăшнă. Нумай çул хушши Республикăри кĕнеке юратакансен обществине ертсе пынă.

Лидия Ковалюк Раççей Журналистсен союзĕн тата Раççей Писателĕсен союзĕн членĕ.

Çыравçăн малтанхи сăввисемпе калавĕсем саккăрмĕш класра вĕреннĕ чухнех шкулти стена хаçатĕнче пичетленнĕ, ун хыççăн районти «Авангард» хаçатра, республикăри хаçат-журналта кун çути курнă, халĕ те тăтăшах пичетленсе пыраççĕ.

Унăн халиччен «Ырă кун», «Тавах, ачам», «Çурхи вăй», «Шурă акăш» кĕнекисем тухнă.

Вĕсене вулакансем те, критиксем те ăшшăн йышăнчĕç. Ун хайлавĕсем пирки Порфирий Афанасьев, Васлей Игнатьев, Юрий Айдаш, Вениамин Тимаков, Иван Чермаков ырă сăмах каларĕç, Чăваш Патшалăх университечĕн студенчĕсем диплом ĕçĕсем çырчĕç.

«Юрату çăлкуçĕ» Лидия Ковалюкăн пиллĕкмĕш кĕнеки. Вăл, тĕпрен илсен, Тăван çĕршыв, çуралнă ен, çамрăклăх, юратупа туслăх çинчен çырать. Шухăша сăнарлă, витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ калать, пурнăçа тĕпчевçĕ куçĕпе пăхать. Пурнăçра ырришĕн кĕрешекен, чун тасалăхне упракан лирикăлла ґерой ман кăмăла кайрĕ. Чăваш Республикин К.В.Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕ Юрий Айдаш поэт калашле, Лидия Ковалюкăн хальхи сăввисенче хĕрарăмла ачашлăх, çепĕçлĕх, ырă кăмăллăх тыткăна илет. Манăн ку енĕпе унăн «Сухаçă», «Чĕнӳ», «Сада эп юрататăп», «Ялти ĕçчен хĕрарăмсене халалласа», «Шутлатăн пуль. Хĕл сиввинчи...», «Таврăнать, сăн илет эп çухатнă хаваслăх» тата ытти уйрăм сăввисене палăртас килет.

Сăвăç тăван сăмахлăха лайăх чухлать, унпа пĕлсе те ăнăçлă усă курать.

Вăл юмахсем, легендăсем, балладăсем çырас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлет.

Ку кӗнекене унӑн «Ҫӑлтӑр витӗр ҫул выртать» легендине кӗртнӗ. Ӑна вӑл хӑйӗн амӑшӗ Натали аппа халапҫӑ /Наталия Михайловна Антипова/ каласа панӑ тӑрӑх ҫырнӑ. Унта автор темиҫе ӗмӗр каялла ирӗклӗхшӗн ҫуннӑ, пусмӑра хирӗҫ кӗрешнӗ халӑхӑн шухӑш-ӗмӗтне кӑтартса парать. Легенда хӑйнееверлӗ те ӑнӑҫуллӑ пулса тухнӑ.

Манӑн Лидия Ковалюка халалласа ҫырнӑ «Сан пекки никам та ҫук» сӑввӑм лайӑх хайлавсемшӗн тав сӑмахӗ вырӑнне пултӑр.

Эх, Литюк Ковалюк,
Сан пекки никам ҫук.
Санпала калаҫни –
Чунӑма ӑшӑтни!
Сӑввусем пит хитре,
Час-часах пичетре
Курӑнаҫҫӗ вӗсем-
Кашни ҫутӑ илем!
Манас ҫук пӗр-пӗрне
Нихӑҫан ӗмӗрне.

Ваҫлей Давыдов-Анатри,
Чӑваш халӑх поэчӗ.
2002 ҫ.

# ТУРТĂМ

## СУХАÇĂ

Сулмаклă утăмпа сухаçă
Кăвак çутлах тухать хире.
Васкавлăн сирĕлет çу каçĕ,
Васкавлăн çухалать тĕтре.

Хутлам-хутлам уçса вуланăн
Хура тăпра кĕнекене
Ĕçлет çĕрпе вăл пĕр тăванлăн,
Курса тăран çуталнине.

Ăна поэт тесен те юрĕ,
Мĕн-ма тесен ик эрнерен
Калча хĕвелĕ партитура
Пулса шăтать çав пĕрчĕрен.

Пĕр пĕрчĕрен тухать пин пĕрчĕ,
Вара, кĕрхи кунсем çитсен,
Ӳссе ларать çĕн тырă сăрчĕ
Чи аслă мул пекех хитрен.

Тавтапуçах сана, сухаçă,
Сăпайлă пурнăçушăн тав.
Садра çĕн юрăсем юхаççĕ
Кӳреççĕ сан ятпа мухтав.

## ЧĔНӐ

Эп ĕçсĕр пурăнмастăп, пурпĕрех
Çусамччĕ тетĕп çумăр вăйлăрах!..
Пурнатăп шăп, тĕлĕнтермĕшсĕрех,
Йăмра вулли çеç çаптăр хытăрах.

Çапла-тăр, чечексем, тĕссем çинче,
Çӳлте, илемлĕх ĕмĕр пурăнать.
Хăруш çил-тăвăл тухĕ пĕринче –
Кăваклăх систермесĕр арканать.

Шур тĕс – ачалăха асилтерен
Тăван кил патнелле пыран çул пек.
Кăваклăхра çĕтсе эп çӳресен,
Поэзи евĕр, çул чĕнет халь тек.

Пурнатăп эп ялан хаваслăхра,
Пурнатăп эп сӳнми чăвашлăхра,
Пиншер-пин юрăллă çĕршывăмра,
Пиншер-пин тĕрĕллĕ Чăвашстанра.

## САДА ЭП ЮРАТАТĂП

Шур тумлă сад, ăна эп юрататăп,
Çĕр мамăк евĕр çеçкере ларнишĕн,
Саркайăксен ытарайми юрришĕн,
Кайран нар питлĕ панулми панишĕн.

Çу кунĕнчи сада эп юрататăп
Вăл кĕмĕл сывлăмпа йăл çуталнишĕн,
Пур йывăç пăшăл-пăшăл калаçнишĕн,
Чун-чĕрене патвар çунат панишĕн.

Çапла, çапла сада эп юрататăп
Вăл шăпчăксен юррисемпе тулнишĕн,
Унта ыр шăршă ÿсĕртсе янишĕн,
Мана савни пит хыттăн чуп тунишĕн.

Кĕрхи сада ытла та юрататăп
Кĕрхи кунра эп тĕнчене килнишĕн,
Улмуççисем улмисемпе ларнишĕн,
Çумрах сырлан сар ылтăн пек çиçнишĕн.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

Тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи,
Вăл ĕлĕкхи те, вăл хальхи,
Асаттесем унпа калаçнă.

Тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи,
Вăл нимĕнрен те чи пахи.
Тавлашнă унпала, çураçнă.

Тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи,
Чĕре юрри, хайлав юххи,
Ман юнăм та ман тус-юлташăм.

Тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи,
Чăваш эрешĕ те тĕрри.
Унра пурнать чăваш малашĕ.

Тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи,
Çирĕплетет вăл пĕрлĕхе.
Вăл ĕмĕр-ĕмĕрех упрантăр.

Тăван чĕлхем – чăваш чĕлхи,
Хушса пырса хĕрӳлĕхе,
Чăваш вăрманĕ пек хунатăр!

## МĔНЛЕ ПУРНАН, ÇУРАЛНĂ ЕНĔМ?

Каллех ума тухать ман ялăм,
Мана та вăл нихçан манмасть.
Ялан эс маншăн çывăх, хаклă,
Эс ăшăтатăн чунăма.

Мĕнле пурнан, çуралнă енĕм?
Тавах сире, уйсем-хирсем,
Эсир мана телей пилленĕ,
Кунта çын пултăм вăй илсе.

Сар тулă юхрĕ хумлăн-хумлăн,
Хирпе утатăп савăнса.
Пучах мана халь сума сунăн
Салам, салам тет пуç тайса.

## САВНĂ ЧĂВАШ ЕНĔМ

Ман çуралнă çĕрĕм-шывăм,
Чунăм савнă Чăваш ен,
Яланах эс ырă, сывă,
Эп юрлатăп сан çинчен.

Сан ятна эп асăнатăп
Хăть хăçан та юратса.
Эп кирек ăçта кайсан та –
Эс тăратăн вăй парса.

Эпĕ кайрăм Турцие те,
Греције те Сирие –
Эп санпа çунса хĕмлентĕм,
Эсĕ пултăн чĕрере.

Яланхи пек – эс шăпаччĕ,
Манăн çутă çăлтăрччĕ.
Çавăнпа эп тунсăх марччĕ
Çак инçет çĕршывсенче.

Сан тӳпӳ таса та тăрă,
Тăнăç пурнăç çĕр çинче –
Çакăншăн эп çунса тăрăп
Хам кун-çул вĕçлеиччен.

Çамрăксем пит тăрăшаççĕ
Пур ĕçре, вĕренӳре –
Халь сана тупа тăваççĕ
Юратса чун-чĕререн.

Ырă тĕслĕх: тăнĕ-ăсĕ
Ват çынсен – çамрăксене.
Çирĕп пултăр лайăх тăсăм,
Эп мухтатăп кашнине.

Ман çуралнă çĕрĕм-шывăм,
Чунăм савнă Чăваш ен,
Яланах пул ырă, сывă,
Эп юрлатăп сан çинчен.

# ĂМĂРТКАЙĂКСЕМ

Юратнă ăмăрткайăксем!
Епле мăнаçлăн ярăнатăр,
Сăртсен, тусен те тинĕссен
Сăн-сăпатне çӳлте куратăр.

Хиселлĕ ăмăрткайăксем!
Телей çуначĕ туянасчĕ,
Тӳпенелле чĕнет чĕрем,
Унта кăна поэт хăвачĕ.

Хăюллă ăмăрткайăксем!
Сирĕнпеле ман ăмăртасчĕ,
Сив сывлăша авăснăçем
Ман Çеçпĕл тĕнчине тухасчĕ.

*   *   *

Ман Шӑнкӑртам çыранӗсем тавра
Чӗр çӑлкуçсем чылай, хӑвах куран.
Çӑлкуç патне ак эп пырса тӑратӑп,
Хумханнӑ кӑмӑлпа ӑна тӑнлатӑп.

Асаттесем юратнӑ çак çӑла –
Кунта ватти-ӗтти куллен вӑй илнӗ.
Сипленӗ йывӑр суранне ялан,
Асамлӑ шыв, туятпӑр, чӑн та пиллӗ.

Юрлать çӑлкуçӗ, кӗвӗ кӗвӗлет,
Хавал парса мана ӗнентерет:
«Чӑваш поэчӗ эс! Мана пӑхатӑн,
Хӑв халӑхна та çул тупса паратӑн».

Ман Шӑкӑртам çыранӗсем тавра
Чӗр çӑлкуçсем чылай, хӑвах куран:
Вӗсем тӑвансене аса илеççӗ,
Мана та, хӑй хӗрне, телей пиллеççӗ.

## ЯЛТИ ЁÇЧЕН ХЁРАРĂМСЕНЕ ХАЛАЛЛАСА

Аппамсем, ёçчен хёрарăмсем!
Ялкăшса çунса вёрерё
Кăкăрти вут-çулăмлă чёрем,
Шухăшсем çӳлте çӳрерёç.

Ялтăратрёç хёлхемсем-сассем.
Шухăш юрăра вăйлантăр.
Чечек евёр çурăлтăр чёрем,
Юрă хёлёхне янраттăр.

Çут телей çинчен эп юрлăттăм.
Вăл ыр шăршине сапалё,
Ун техёмёпе эс сывлăттăн –
Чечексем сана ыталёç.

Илтёнё çурла кăчăртатни,
Илтёнё тыр-пул кашлавё,
Çил сасси, тăри тăрăлтатни,
Ялсенчи улах шăв-шавё.

Амăш ачине юр юрласа
Çывăрттарнине те илтён.
Таврана эп илёп çавăрса,
Юрăпа эп кӳрăп витём.

Çĕклĕп тăван халăх кăмăлне –
Эп хаваслăх парнелетĕп,
Хурăп вут вĕсен чĕрисене,
Шанăçпа эп киленетĕп.

Аппамсем, ĕçчен хĕрарăмсем!
Мĕншĕн эсĕр сӳрĕкленнĕ?
Çакăн пек шанаççĕ чечексем,
Ман чун ыратать - ĕненĕр.

Тăвăл йывăçа хур тунă пек,
Аслати чула тĕпретнĕн
Çĕтеретпĕр шăпа пӳрнине
Сăн-сăпатăра ĕретĕн.

Эй, эсир вăй илнĕ чечексем!
Сирĕн çӳçĕрсем шап-шурă!
Пит нумай-çке тунă ĕçĕрсем,
Инкекне сахал мар курнă!

Эй, эсир çунатлă кайăксем!
Хĕлĕхсем кĕтеççĕ, каранна,
Юн вылять, хĕрӳн тапать чĕрем,
Сирĕншĕн вĕсем халь тапăннă.

Аппамсем, ĕçчен хĕрарăмсем!
Хаклăран та хаклă çыннăмăрсем!
Сирĕншĕн янрать халь, туйăр,
Ман чĕремре чĕнӳллĕ юрă.

## КЁРКУННЕ

Ĕнтĕ уй-хирсем пушаннă,
Тырă-пулă пÿлмере.
Çĕрулми эпир кăларнă,
Сухаланă уй-хире.

Йывăçсем çинче, эс кур-ха,
Йышлă-йышлă панулми.
Йăтăнса ларать – ку пурлăх –
Пуçтарасчĕ ним юлми.

Тăрнасен сасси пит хурлă,
Тен, вĕсен каяс килмест.
Çитнĕ вăхăт – ан кĕт урăх,
Вăхăт никама кĕтмест.

Типнĕ чечексем. Калатăп:
Йĕрки çавăн пек тĕнчен.
Кĕркуннесĕр те юрамĕ,
Унăн пур хăйле тивлет.

Килчĕ йăпшăнса кĕр кунĕ,
Вăл утать халь таврара...
Çĕнĕ пурнăçшăн эп çунăп,
Çамрăклăх тапать чунра.

Ч-40620

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

## ШУРĂ ХĔЛĔМ, САВНĂ ХĔЛĔМ

Чăваш çĕршывĕн сив хĕлне,
Ун шур юрне эп юрататăп.
Шур юрлă аслă хирсене
Ялан эп асăмра тытатăп.
Çывăракан хыр вăрманне
Чун-чĕрене вырнаçтаратăп.

Алманчă ялĕн айккинче
Хальхи пекех хитре инçетчĕ,
Çума-çум çунашка çинче
Ларса вĕçетпĕр, чун сӳлетчĕ.
Çав вăхăт – асилӳсенче,
Эпир ачалăх тĕнчинчеччĕ.

Ай, шурă хĕлĕм, шурă хĕл,
Эс чун-чĕрем, ачаш саркайăк.
Ай, шурă хĕлĕм, шурă хĕл,
Сан чун-чĕрӳ юртан, хăй майлă.
Хĕл, пирĕн ĕмĕт килчĕ тĕл,
Эс мĕнешкел пит ырă, лайăх.

Ман патăма эс çывхарсам,
Юратнă тусăм, эс килсемччĕ.
Çак юрлă уй-хире пăхса
Ăна ху ытамна илсемччĕ.
Мана та ытала савса,
Ман чун çунать – çавна сиссемччĕ.

Çывăракан хыр вăрманне
Чун-чĕрене вырнаçтаратăп.
Шур юрлă аслă хи́рсене
Ялан эп асăмра тытатăп.
Шур юрлă савнă хĕллене
Манмастăп эп – тупа тăватăп.

## ТАВ САМАХĔ

Сив хĕле эп тав тăватăп –
Юр, пас пачĕ вăл мана.
Тав тесе сана калатăп –
Патăн юрату чуна.

Сив хĕле эп тав тăватăп –
Килентерчĕ шур сăнпа.
Тав тесе сана калатăп –
Çунтаран юратупа.

Тăвăла эп тав тăватăп –
Вăл вăйлатрĕ шухăша.
Тав тесе сана калатăп –
Вут хыптартăн ман ăша.

Эп ачашлăхран тăратăп! –
Ман ачашлăхăм чакмасть.
Эп кăнттамлăхран хăратăп –
Вăл касать ман пуçăма.

*   *   *

Çăвать шур юр халь, кĕмĕлленнĕ юр,
Çăвать, çăвать шур юр аллана евĕр.
Шур юр çăвать чĕрем çине, туй, кур!
Мĕскер мана кĕтет, утап пĕлмесĕр.

Çанталăк сивĕ, сивĕ пăр пекех,
Ман чунăма та сивĕтесшĕн мар-и?
Ял ĕнтĕркенĕ. Эп çӳреп текех,
Никам та алăк уçма шутламарĕ.

Сив хирĕçӳ е кăткăс кĕрешӳ –
Тĕрĕслĕхе пĕлесшĕн эп çунатăп,
Хавхаланса утап – çук кӳлешӳ,
Çĕнĕлĕхе шырап хĕлле, çулла та.

## ХУРĂНĂМ

Эй, турăçăм!
Çурт умĕнчи шап-шурă хурăн,
Ан хăй кăна эс хурланма.
Эс маншăн – чаплă-чаплă юрă,
Пултарас çук сана манма.

Эй, турăçăм!
Сана кам çапнă, хăш ăнманĕ?
Куратăп тĕрлĕ çĕвĕсем.
Сана эп ĕмĕрех упранă,
Хайланă çепĕç юрăсем.

Эй, турăçăм!
Ман патарах утса килсеммчĕ,
Ак умăнтах выртать сукмак.
Ман çинелле пăхса илсеммчĕ,
Вăй-хал та çук пуль çав утма?

Эй, турăçăм!
Эс утăм турăн та аташрăн,
Ма пăрăнан хăв çулунтан?
Пус сылтăма, халь ак майлашрĕ,
Ак халĕ чиперех утан.

Эй, турăçăм!
Тĕнче илемĕ эс. Паратăп
Сана эп хамăн чунăма.
Сана кăваррăн юрататăп,
Кĕрсем, кĕрсем ман çуртăма!

## ЁМӖРЕХ ПУРНАТЬ ЧӖРЕ

Тӗрӗс ӗҫшӗн ҫунса тӑнӑ чух,
Илемлетнӗ чух сӑпайлӑхпа,
Кӑварланнӑ чух вут-туйӑмпа
Ун нихҫан вӑй-халӗ чакмӗ, ҫук –
Ёмӗрех пурнать чӗре!

Ярӑнать вӑл ҫӳллӗ тӳпере,
Аякри сӑрта вӑл сӑн кӳрет,
Кирлӗ - тарӑн тинӗсе анать,
Хӑй вӑл чышкӑ пысӑкӑш кӑна –
Ёмӗрех пурнать чӗре!

Кашнине парать вӑл юрату,
Пирӗн тӑнӑҫ пурнӑҫ никӗсне
Вӑл хывать. Калать: «Эс ырӑ ту,
Пехилле телей пур ҫынсене». –
Ёмӗрех пурнать чӗре!

Вилӗмлӗ эпир... Никам пӗлмест
Ҫакӑ юлашки сехет хӑҫан?
Пурпӗрех чӗре ҫӗрте ҫӗрмест,
Вӑл тапать мӑнуксенче кайран –
Ёмӗрех пурнать чӗре!

## ЭП ĂНЛАНТĂМ ÇĔР ЧĂНЛĂХНЕ

Çунатсем пуласчĕ манăн – шухăшлатăм.
Пулнă вăхăт – эп вĕçеттĕмччĕ кас-кас.
Эпĕ кайăк пулаймарăм – йышăнатăп –
Пур пулин те çунатсем, мĕн-ха тăвас?

Таврăнтăп эп, кĕтсе илчĕ çĕр-тăванăм –
Чăнлăхне ăнлантăм. Эп калап чунтан:
Тăрăштăр йăва пирки лаштра вĭрманăм!
Эп сывларăм ассăн – кайăка курсан.

* * *

Кунта хӗвел пайӑркисем
Ача пекех выляççӗ.
Йӗри-тавра юханшывсем
Илемлӗн çуталаççӗ.

Кунта вӗри çилсем питрен
Ачашшӑн çупӑрлаççӗ.
Тем тухатса кӗтмен çӗртен
Чуна хумхантараççӗ.

Кунта шап-шурӑ чечексем
Юр евӗр хӳхӗм тумлӑ.
Кӑштах çеç сывласа илсем –
Ялан эс пулӑн çамрӑк чунлӑ.

Кунта кашни кун шурӑмпуç
Вутла çунни – асамлӑх.
Хӑть пурӑнма халех эс куç –
Пурте параççӗ алӑ.

* * *

Пĕчĕк пӳрт авалхи йывăççем хыçĕнче,
Çав пӳртрен илтĕнеççĕ ачаш сасăсем.
Пулнă йывăр çулсем, çав синкер çулсенче
Тарăн вар тĕпĕнче–мĕн пытаннă çынсем.

Ман умра чăнкă çыр, çăмăл мар çĕкленме.
Чăмăртатăп алла, хытарап чĕрене.
Çитеретĕп хăюлăх сире пĕлтерме:
Иртнĕ кунăн кĕвви çавăнтан илтĕнет.

Асăрхаççĕ куççем умра ик мĕлкене –
Чаккапа Тайпин шухăшлă сăнĕсене.
Йывăççем хушшинчен ак тухаççĕ вĕсем,
Мана курчĕç – пуçларĕç чупма шикленсе.

Кăшкăратăп, чĕнетĕп ан тарăр тесе,
Вĕсене хăтарма эп шыратăп тĕрев.
Итлемерĕç мана, пач çухалчĕç вĕсем,
Унтанпа канăç çуккă ман чун-чĕрере.

* * *

Пур хӗлӗн лӑпкӑ кун е ҫил-тӑман,
Этемӗн те тус пур, ҫук мар тӑшман.
Тӑшман хура куҫӗсемпе пӑхать,
Таса ҫынна вӑл хур тума шутлать.

Эп тухрӑм урама ирпе ирех.
Ав пӗр ҫӑхан пус ҫийӗн явӑнать.
Кранк! Кранк! тесе вӑл сас парать текех,
Вӑл, тен, усал сунасшӑн халь мана.

Ман пурнӑҫ сулӑнсан та кӗр енне,
Умра ҫиҫет ем-ешӗл ҫуркунне.
Хӗвел енне ҫӗр вӑрттӑн ҫаврӑнать,
Чунран сӑмах каласшӑн вӑл ӑна.

* * *

Юратап уй-хирĕн ылтăн пуссине.
Катари каç мĕн тери чипер, сăна!
Ирĕклĕ те тарăн шывăн анлăшне
Сар уйăх аннă, çăвăнать.

Çурт. Ура сассийĕ ун çенĕкĕнче,
Çывăх çын-ши е çӳрет усал тăшман?
Хурлăх, хуйхă сывлакан çын сассинче,
Тен, кĕтет хăйне вăл пулăшма.

Çав çын хуйхине пĕрле пайлас пулать,
Шырамастăп эпĕ аякра рехет.
Сасăсен тĕнчи мана тытса чарать,
Чĕрене темскер çатăрласа илет.

## АЧА ШКУЛА КАЯТЬ

Пĕрремĕш хут, пĕрремĕш кун
Пĕчĕк ача каять шкула.
Пуçланчĕ ĕç сукмакĕ ун.
Вăл тухрĕ халь инçе çула.

Хăй ăнланмасть ăна-кăна.
Виçесĕр лайăх халь ăна.
Утать, чупать кула-кула –
Пĕрремĕш хут каfive шкула!

## ВĂРĂМ ЁМĔР ЭП СУНАТĂП

*Мария Петровна Никитинана*

Вырăсла та, нимĕçле те
Вулама та калаçма
Тăрăшуллăн вĕрентеттĕн –
Çак килет халь асăма.

Шкул ертӳçинче ансат-и -
Улшăнмасăр нумай çул
Сумлăн эсĕ вăй хурсаттăн.
Çирĕп сывлăх, ăнăçу,

Вăрăм ĕмĕр эп сунатăп,
Эп сире нихçан та манмăп.

## ЁÇĔР ХĔВЕЛЛЕ ÇӲЛЕ ÇĔКЛЕНТĔР

*Халăха вĕрентес ĕç отличникне*
*Василий Иванович Васильева*

Пултарулăх сирĕн тĕрлĕ енлĕ:
Физик, вĕрентӳ пай пуçлăхĕ,
Шкул директорĕ... Нимле пĕлменлĕх
Çук пуль – ку чун та ăс ырлăхĕ.

Çĕр-çĕр ачана эсир ăс патăр,
Вĕрентсе кăлартăр çул çине.
Чĕререн сире халь тав тăватпăр,
Тухас çук асран мĕн ĕмĕре.

Нихăçан та канăçа пĕлместĕр,
Йĕркелерĕр ялăн музейне.
Ёçĕр хĕвелле çӳле çĕклентĕр,
Ăшăттăр, вăй патăр сынсене.

## ÇЫН ХУШШИНЧЕ ЭС ХИСЕПРЕ

*Тăван аппана*
*Мария Алексеевна*
*Аршуткина-Антипована*

Терт-нушине сахал-и курнă
Эпир пурнан пурăнăçра.
Çапах та шанчăк çеçке çурнă,
Вăй тапнă чĕрере-чунра.

Мана эс пулăшса пыраттăн,
Эс суннă ыррине мана.
Асли пулса эс ăс параттăн,
Нихçан та манмăп эп çакна.

Эс ăслă тухтăр, пултаруллă,
Паян та тăрăшан ĕçре.
Ялан çапла маттур çеç пул эс –
Çын хушшинче эс хисепре.

## ПУЛĂРАХ ЯЛАНАХ МАЛТА

*«Чувашагропромстрой» ертӳçине,*
*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строительне,*
*Раççей Журналистсен союзĕн членне*
*Геннадий Сергеевич Игнатьева*

Тӳпере шăвать хĕвелĕ,
Парнелет хăй ăшшине
Ялкăшса çиçсе илемлĕн
Уй-хире, вăрмансене.

Кăмăлĕ ун сирĕн евĕр,
Тимлесе ĕçтăвкомра
Халăха ыр турăр эсĕр –
Тав тăвать кашни чунран.

Çурт-йĕрсем те, хваттерсем те
Турăр-лартрăр сахал мар,
Халăха тивĕçтеретĕр
Ĕçĕрпе пулса хастар.

Эсĕр пит ăста çыравçă –
Мухтавра хайлавăрсем.
Юратса сире вулаççĕ
Ваттисем те çамрăксем.

Пысăк вырăнти ертӳçĕн
Тилхепи халь аллăрта,
Тĕллеве куратăр уççăн –
Пулăр яланах малта.

## САНА ЧУНТАН ЮРАТСА

*Тăванăма, ача-пăча шăл врачне*
*Христина Андреевна Тестова-Антипована*

Эс ырă кăмăллă, илемлĕ,
Çынсемпе пит таракат.
Çунать-ха çамрăклăх хĕлхемĕ
Чун-чĕрӳнте, йăшмасть хăват.

Ача-пăча сыв пултăр тетĕн,
Çакна ялан асра тытса,
Пĕр ывăнми хастар ĕçлетĕн,
Канăçлăха манса кайса.

Ача-пăча çĕршыв тĕрекĕ
Тесе тимлетĕн савăнса.
Çак сăввăма хайларăм эпĕ
Сана чунтан халь юратса.

## ЫРРИНЕ ÇЕÇ ÇУЛ ПАРАР

*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ юристне*
*Владимир Васильевич Илларионова*

Эсир çамрăклăхри юлташăм,
Çитĕнтĕмĕр пĕр вăхăтра.
Ялта янратнă юрă-ташă
Паян та манăн асăмра.

Тĕрĕслĕхе пит юрататтăр,
Эсир пуласшăнччĕ юрист.
Ĕмĕтĕре чăна кăлартăр,
Ĕçсем ăнса çеç пыччăр-и.

Эсир судья пулса ĕçлетĕр,
Тӳре пулмашкăн çăмăл мар.
Киревсĕрлĕх, хăрушлăх çĕттĕр,
Мĕн ыррине çеç çул парар.

## ХАЛĂХУ САНА МАНМАСТЬ

*Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн*
*тава тивĕçлĕ ĕçченне*
*Алексей Григорьевич Хитрова асăнса*

I

Чăн ертӳçчĕ эс – çаплах:
Сан пултарулăхна пулах
Ял сыннин çултан-çулах
Пычĕ пурнăçĕ ăнсах.

Эс ху пекчĕ пур енпе:
Сăнупа, чун-чĕрӳпе,
Тĕрлĕ пултарулăхпа,
Иксĕлми талантупа.

Ĕçшĕн тăтăн тăрăшса,
Çут культурăшăн çунса.
Кам пит курайман сана –
Тур касартăр çав сынна.

Хура пĕлĕт сан патна
Мĕнле хăйса пычĕ-ши?
Пынă чухне эс ăна
Мĕнле сисеймерĕн-ши?

Пит тасаччĕ сан чуну,
Хăвпалăччĕ çут куну.
Сана усал суннисем
Кайрĕç ылпеле вĕçсе.

II

Усал вăятем хăш-чух сисет-и
ĕçченлĕхĕ чунне сипленĕ чух?
Анчах хăйне чăн-чăн этем хисепĕ
тарăхтараъ те – картишрен ан тух.

Чăн-чăн ĕçтен картишĕнче çеç лармĕ -
вăл хăйĕн ăмăлне, ыр ĕмĕтне
ыттисенчен хыт кукарла пытармĕ,
шырамĕ çăмăл пурнăç пылакне.

Анчах ăмсанчăксем – ним тăваймасăр –
канаш тăваçĕ вилĕмпе час-час.
Ак эсĕ куçна хупрăн. Тăратпăр сассăр –
çав сасă - чĕрере. Куççуль тухмасть.

## ТАПСА ТĂРАТЬ ĂСĂР-ХАЛĂР

*Чăваш Республикин архивсем енĕпе ĕçлекен*
*Патшалăх комитечĕн ертӳçине, Чăваш*
*Республика культурин тава тивĕçлĕ ĕçченне,*
*Раççей Федерацийĕн хисеплĕ архивистне*
*Анатолий Васильевич Выйкина*

Çĕнъял хăй евĕрлĕ, илемлĕ,
Нихçан пулман чухăнлăхра.
Калас-тăк, сирĕн ял телейлĕ
Эсир кунта çуралнăран.

Ĕç турăр районта сахал-и,
Эсир пăхман çын кусĕнчен.
Çунса тăратăр эсир халĕ
Архивăн кăткăс ĕçĕнче.

Эсир историк, ăсăр-халăр,
Çут çăлкусла тапса тăрать.
Çавăнпалан хисеп-мухтавăр
Куллен-кунах ӳссе пырать.

## ПАРАДОКС

Ыр тӳйӑмсем те «резервацире»
пулаççӗ тепӗр чух.
Пурне те шанакан чӗрен
нихçан та хӳтлӗх çук.

Усал-тӗсел хуçалансан тӑрук
кӑварланать чӗрем.
Çын тивлетне çухатнӑран хӑш чух
тухатӑп «резервацирен».

# ЧУНРАН

* * *

Шутлатăн пуль: хĕл сиввинче,
Çак Шăнкăртам шăнса пăчланчĕ.
Анчах, тăнла, пăр айĕнче
Тапса тăраççĕ, ăнлансамччĕ,
Çăлкуçĕсем. Вăй – вĕсенче!

Чĕре те вăй пухать çапла –
Çăл пек юратăва упрасчĕ.
Пурнăçра пĕрле ялан
Килĕштерсе кăна пурнасчĕ.

* * *

Йăлăхтарчĕ: каç та, ир те
Çурĕ, çурĕ çумăр... Иртрĕ.
Ĕнтĕ кантăк умĕнче,
Чăрăш лăссисем çинче,
Темĕн чул хунар çунать,
Çĕн Çул çитнĕн туйăнать.

* * *

Эс çӗн каçсен çӗн шухӑшӗ пекех...
Эс симӗс çуркунне пек ман ума
Çитсе те тухрӑн. Тунсӑхӑм текех
шӑнтаймӗ кӑмӑла. Ырри – нумай.

Пӑхам-и кармашса чӳречерен?
Кӑвак та пысӑк чӳрече сана
кӗтсе пуль уçӑлать. Эп çӗнӗрен
итлетӗп çӗкленӳллӗ сассуна.

Эс çӗн кунсен çӗн шухӑшӗ пекех...
Эсех пуль терӗм манӑн çуркунне.
Чуна шӑнтаймӗ сивӗ кун текех –
Кӗрер телейлӗ ӗмӗт пахчине.

* * *

Тавранать, сан илет эп çухатна хаваслах,
Шухаша та çĕклет ĕнтĕ уйăх кимми.
Арăш-пирĕш кун-çул пурпĕрех питĕ аслă,
Ĕмĕр тинĕсĕ шавлĕ нихçан лăпланми.

Шурăмпуçĕ килсен, ун çути сăнăм витĕр
Сан пата çитмеллех. Тĕлĕнтермĕш тĕнче
Пулĕ маншăн ялан çакă пурнăç кĕвви те,
Çутă ĕмĕт кĕвви – ман чĕре тĕпĕнче.

Чĕмсĕрленнĕ каççем тепĕр хут саса пачĕç,
Юрă юхрĕ хуллен укăлча патĕнче.
Эсĕ пулăн ялан манăн ĕмĕт çуначĕ
Çак тӳпе айĕнче, çак хĕвел çутинче.

* * *

Макăрсан та пуплем кăмăлтан,
Юратсан эс çухалмăн манран.
Тен, телейĕм пӳрмен пуль мана?
Тӳсмелле, чăтмалла яланах.

Çухалать-и тĕнче эп çунсан?
Хăçанччен-ши, хĕрарăм, хăçан
Куççуль витĕр кулма пăрахам?
Кам калать-ши ăшри сăмаха?

Калаканĕ çукрах пуль тесе,
Эп утатăп хуллен эрленсе.
Савмасан ан пытар сăмахна –
Эп ăнланăп вара сан хакна.

* * *

Ма хăпмасть-ши манран нуши-терчĕ?
Çакă шухăш пĕрмай çӳçентерчĕ.
Вăйлă çил урaран ӳкерсен,
Сăнпала та эп ӳкрĕм тĕсрен.

Эпĕ сан шур кĕпеллĕ тусуччĕ,
Туратпа шурă çĕмĕрт, ав, сулчĕ –
Сӳнчĕç, пĕтрĕç хитре самантсем,
Çухалаççĕ палланă сассем.

Эпĕ сан шап-шурă çĕмĕртӳччĕ,
Юратуллă кунсен çукчĕ шучĕ.
Çук, тăмастăн тек манăн çумра –
Куç хуралчĕ, тĕтре çеç умра.

* * *

Куллу та санăн сапаланчăк...
Эп саншăн калайман сăмах кăна.
Çакна эп халиччен туйманччĕ -
Санран тарам-и сулхăна?

Чăн юрату манра вăй илĕ
Сан куçусем сăмах хушсан.
Вара пире тăванлăх пилĕ
Телей те парĕ - астусам.

* * *

Кантăкран та пăхмĕ уйăх –
Пач тарса çухалнă вăл.
Çук, пĕтмен-ха шухăш-туйăм –
Кулкалар-ха йăл та йăл!

Ан ларсам манпа эс ӳлĕм
Ĕмĕрхи хăна пулса.
Эс пулсан çеç çĕнтерӳллĕн
Утăп телее тупса.

* * *

«Юрататăп!» - тесе пăшăлтат, -
Манран çухалса эс ан кай.
Кăмăла тăвăл евĕр хускат –
Юрату пикине çеç пуç тай!

* * *

Çунса пăхаççĕ куçусем çаплах...
Апла пулсан сÿнмен-ха çамрăк ĕмĕр,
Вăл çеç, вăл çеç калаçĕ хаçатла,
Ĕмри те хаçатлах çухалĕ чĕмсĕр.

Çунса пăхаççĕ куçусем... чĕре
çамрăклăхне поэт хăçан çухатнă?
Ах, хаçатри тăхлач кĕрет чĕрре –
анчах вил шухăш ун çулне пач татнă.

Пулман та унăн çулĕ! Ма тесен
вăл ют ăссен тарçи пекех ирттернĕ
хăй ĕмĕрне çуллен лĕпĕстетсе
унта-кунта. Чунне çынран пистернĕ.

Чăнах та çамрăк чух ун илемне
ăмсанчĕ ректор та поэт, редактор.
Ăçта халь çав илем? Чĕре хĕмне
мĕнпе вăл чĕртеет? Эх, тур çыр-
лахтăр!

Никам та илеме кивçен памасть,
вăл çавăнпа типсе çухалнă мар-и
кăмăлĕпе – никам та шăвармасть
çак маннă «пахчана» - турри хушмарĕ.

*   *   *

Ятласам, ятла! Шыв çинче те
Сан сăнна эп курмастăп паян.
Юратусăр сана асилместĕп –
Халь сана мĕн тесе пуç таям?

Сăнарна шухăшра пуль ўкертĕм?
Ултаву-уйрăлу – сив куллу.
Шухăшпах сан сăнна ўпĕнтертĕм –
Тек минретмĕ пире тĕлпулу.

*   *   *

Пăрлă çумăр çусан - ĕнтĕркемĕп,
Çула тухнă пулсан – утăп эп.
Шыв сикки умĕнче тăр! чĕтремĕп,
Хам чĕрешĕн ку пулĕ хисеп.

Чечексем хушшинче çеç утассăн
Туйăнатчĕ тахçан санпала.
Кулянса ма сывлас ассăн-ассăн?
Чун юлать тĕлĕкри сăнпала.

*  *  *

Усала ку е ырра –
Кам ăнланĕ, кам пĕлет –
Куç ялан сана шырать,
Чун ялан сана кĕтет.

*  *  *

Килетĕн –
Савăнăç кӳретĕн,
Каятăн –
Тунсăха ӳкетĕп.
Пĕччен юлас килмест пĕрре те,
Пĕрмай, пĕрмай сана кĕтетĕп.

*  *  *

Савăнатăп çавă куншăн,
Иккĕн утнă савăк çулшăн,
Илемӳшĕн, ыр чунушăн,
Шанăç кӳнĕ калаçушăн...

Савăнатăп эс пурришĕн,
Тунсăхлатăп эс инçишĕн.

*   *   *

Эпир тĕл пулнă ăнсăртран,
Туслашнă хытă савнăран,
Паян калатăп: эсĕ - ман.
Пĕл эс те ĕнтĕ: эпĕ - сан.

*   *   *

Кун сĕре илемлĕ,
Юмахла хитре!
Эп ытла телейлĕ,
Ирĕлет чĕре:
Эсĕ - манпала,
Эпĕ - санпала.

*   *   *

Эп савăнатăп – эсĕ савăнсан,
Куçран пăхса ачашшăн йăл кулсан,
Чуну кансассăн, кăмăлу тулсан,
Хăвна тулли телейлĕ эс туйсан.
Сана ялан çапла курасчĕ ман.
Ун чух салху пулмастăп эп нихçан.

* * *

Кăн-кăвак куçăмсенчен
Шăрçаланса куççуль юхать.
Тен, çамрăк ĕмĕр иртиччен
Шăнкăр-шăнкăр куççуль пулать.

Çăлкуç патне çитиччен
Аш-чикĕм йăлт çунса тухать.
Ĕçĕттĕм те тăраниччен,
Куççуль çаплах шăпăртатать.

Ĕçес тесе çăлкуç умне
Пĕшкĕнсенех чун тăвăнчĕ.
Сан ĕмĕлкӳ çăлкуç хумне
Ӳксе çухалчĕ, шăвăнчĕ.

Куççулĕпе тăварлансан
Пĕтет çăлкуç шерпечĕ те.
Мĕн пулнине мансам, мансам!
Анчах ан явăн ман тĕлте.

## КĂКĂРĂМ ÇĔКЛЕНЧĔ ÇИЛЕ ХИРĔÇ

Кĕтнĕ çыннăм:
Эп çапла шутлатăп:
Йăнăшрăмăр пулмалла каллех:
Вăйсăр хĕлхемрен, итле, калас-тăк,
Хыпса илтĕрччĕ вут, тем пекех.

Шанчăксăрăм эсĕ,
Эп пĕлетĕп –
Хура кун иртет, килет çутти.
Кăвак çулăмпа кĕллентĕр тетĕп
Пур çитменлĕх те тата ытти.

Ман кӳренĕвĕм,
Эс ăнлансамччĕ,
Каялла таврар мар иртнине.
Куççульпе нихçан та сыватмаççĕ
Чĕрери нимле сурансене.

Ман аташăвăм,
Умри сăр карă
Хыçĕнче ӳпкевлĕ сăмахсем
Илтĕнеççĕ. Эп курма пуçларăм:
Ман умра çиçет, ав, çут илем.

Ман кулянăвăм,
Тен, вырнаçаймĕç
Чыс-сăваплă сăмахсем санра.
Эп усал сăнна халь каçарайăп,
Çӳл хуçа сана каçартăрах.

Ӳкĕнĕçлĕ юрату,
Пĕртен-пĕр
Тĕрĕслĕх тĕшши çапла кунта,
Эп чăнлăх çутипе ӳтленнĕ,
Çыннăн çылăхлăхĕпе тата.

Кăмăллă та, кăмăлсăр та эпĕ,
Ырă кăмăллăх, эс пар ална,
Авăртан туртса кăларччĕ тетĕн,
Юрату вăй илтĕр ялана.

Кăкăрăм çĕкленчĕ çиле хирĕç:
Вĕртĕр ĕмĕтĕм вут-кăварне.
Эп салхуллă мĕлкеме – пач сирĕп! –
Ывăтăп чечеклĕх çулăмне.

## САНПА ТĂСАСЧĔ МАН КУН-ÇУЛĂМА

Çӳл тӳпере вылять-ха çăлтăр туйĕ,
Хаваслăх парнелет ман чĕрене.
Анне пĕçернĕ çăкăр евĕр уйăх
Хăй çутине сапать тек çĕр çине.

Эп тутлă шухăша путса тăратăп,
Каç çеç пăшăлтатать халь манпала.
Хуллен-хуллен вăл кайнине куратăп,
Ĕçне вăл турĕ - ун ăсанмалла.

Кашларĕ ялăм çумĕнчи вăрманăм,
Çил ачисем чуптарчĕç выляса.
Анчах, сисеп, чĕрем ман ыйхăланнă,
Çапла, канса илес киле кайса.

Эп пурпĕрех кашни сасса тăнлатăп:
Илтетĕп çырмари шыв сассине.
Хуллен ухлатрĕ ӳхĕ. Ак куратăп:
Çут хурт вĕлтлетрĕ курăк хушшине.

Хама асамлă керменри пек туйрăм.
Тавралăха чунтан сăнанă май.
Савни, пулас килмест санран ман уйрăм,
Санпах тăсасчĕ хам кун-çулăма.

## ЭС ĂÇТА, САВНИÇĔМ?

Эс ăçта, савниçĕм?
Хăш енче çӳретĕн?
Аптăратрăн,
Лартрăн,
Ятăн эс тăнран.
Эп сана чунтан юратнăран чирлетĕп –
Халь пĕр эс çеç сыватмашкăн пултаран.

Унтанпа эп сăвă-юрăсем хайлатăп
Пĕр суймасăрах, пĕр шахвăртмасăрах,
Вутлă чĕремре тупа пур пек туятăп...
Эп – танатара,
Эп – карăмра,
Санра.

Сăввăм-юррăмри пек лайăх эс пулсамччĕ...
Çунтăм-çунтăм,
Кăмрăклантăм,
Халĕ - кĕл.
Упрасам мана эс,
Сыхласах тăрсамччĕ,
Маншăн эс пурри пит кирлĕ халь,
Эс – пĕл.

Ан чупту эс! Çурăлать чĕрем сисмесĕр.
Йăнăшу,
Кăшкăрашу
Ман ăшăмра.
Пурпĕр юрату
Хăватлă улăп евĕр
Хăй ĕçне тăвать:
Чуна хăват парать.

* * *

«Саватăн-и?» - тесе час-час ыйтаттăн...
Саватăп теейсен – вĕçсех каяттăн.
Паян çӳретĕн эсĕ кĕвĕçӳллĕ,
Пăтратрĕç шухăшна – асра тыт ӳлĕм.

«Саватăн-и?» - тесе манран ыйтмастăн,
Малтан каланине те калаймастăн.
Ачаш сăмах чун-чĕрене сиплет,
Чи çепĕççи – вилсессĕн те чĕртет.

## ИКСĔМĔР ЯЛАН ПĔРЛЕ

Çĕпĕр аслă-аслă,
Эпĕ тайгара.
Эс итлен хавассăн
Эп юрлан юрра.

Эп туйса тăратăп:
Эсĕ - юнашар.
Сан сăнна куратăп,
Аллуна эс пар.

Утă халь çулаççĕ
Патăрьел енче.
Паккуссем выртаççĕ
Улăх чĕрçинче.

Эсĕ те çулатăн,
Эп те юнашар.
Эсĕ вăй паратăн,
Эп те юлам мар.

Сар хĕвел илемлĕн
Çĕкленет çӳле.
Иксĕмĕр телейлĕ,
Ма тесен – пĕрле.

Çĕпĕр çĕрĕ аслă,
Шăп ларать тайга.
Умăмри пуласлăх
Чĕнет аякка.

## ЮРАТАР ПĔР-ПĔРНЕ

Ăш çилĕ вĕрчĕ - ырă-çке чуна,
Çут шыв чĕркĕмĕл евĕр ыткăнать.
Юрлар-ха, юратар-ха пĕр-пĕрне,
Илем кĕртер-ха юлнă кунсене.

Васкавлă ишекен шух кимĕлле
Шав ăнтăлатпăр пит инçетелле.
Вĕçетпĕр чарланла – чун, тӳсĕм пар,
Кирек ăçта çитме те ирĕк пар.

Ăш çилĕ вĕрчĕ - ырă чĕрене,
Юханшывсем чупаççĕ инçене.
Туссемĕр, юратар-ха пĕр-пĕрне,
Кӳрер хаваслăх чун-чĕресене.

* * *

Эс – ман телейӗмччӗ,
Халь эс – ман тертӗм ҫеҫ.

Эс – ман ҫунатӑмччӗ,
Ҫунат халь – усӑнчӗ.

Эс ман кӑйкӑрӑмччӗ,
Халь – эс ҫӑханӑм ҫеҫ.

Эп – кайрӑм малалла,
Эс – юлӑн хыҫала.

Памарӑн аллуна,
Ӗнентӗн тӑшмана.

Иртсен ҫурхи вӗҫев,
Кӗрхи ҫитет кӗҫех.

Ҫула эп тепӗр хут
Тухап – эс маншӑн ют.

Чунри чӗнӳ вӗри –
Пулап малти ретри!

## ÇĂЛТĂР ВИТĔР ÇУЛ ВЫРТАТЬ

/Легенда/

Тӳперен пăхать çут уйăх,
Сапалать хăй кĕмĕлне.
Темĕн анлăш çăлтăр уйĕ
Асамлать чун-чĕрене.

Лăпкăччĕ ман ял Алманчă.
Çывăрмашкăн выртиҫчен
Аннепе эпир ларсаччĕ
Калаçса каска çинче.

Ват аннен сăмах-юмахĕ
Кĕрсе юлчĕ чĕрене –
Тутăхми мерчен-ахахăн
Хут çине ӳкерĕнет.

Ĕмĕрсем хыçа ăсаннă -
Шухăшпа каяр унта.
Ерипен йăлтах ăнланăн,
Илтнине тыт асăнта.

Çавал тăрăхĕ. Пĕр хăтлă
Ял – Алманч – ларать унта.
Мăтьшу шывĕ вăй-хăватлăн,
Кĕвĕллĕн шăнкăртатать.

Ял хуçи – Армет алманçă -
Хырçă - урăхла алман –
Халăхран пухать мăнаçлăн
Хан валли – ыйтать Хусан.

Ял хуçи пуян, тупраллă.
Хăй пуçтарнă ясакран
Хĕстерсе те хăвармалăх
Вăл майне пĕлет аван.

Эс унран кивçен илетĕн –
Параймастăн вăхăтра,
Эс вара асап тÿсетĕн –
Памалла сан ытларах.

Ун ачи – пĕртен-пĕр ывăл,
Унăн ячĕ - Тутирек.
Вăл тĕреклĕ, çирĕп, сывă,
Халь пырать вăл çирĕмре.

Ашшĕне пăхман вăл – ырă
/Пур хаярлăх ашшĕнче.../,
Тĕрлĕ ултава çук вырăн
Унăн харсăр чĕринче.

Хумлă-хумлă кăпăш çÿçĕ
Пуснă майăн аллипе
Хумханать. Çиçет ун куçĕ
Юрату вут-хĕмĕпе.

Чӗрине кам вут хыптарнӑ? -
Паллӑ, паллӑ вӑл – Севкке!
Каччӑ канӑҫне ҫухатнӑ,
Шав тухать хӗр тӗлӗке.

Вӑл ӑна качча илесшӗн –
Юрату ҫунтарнӑ чух
Ҫак Севккесӗр Тутирекшӗн
Пысӑк телей урӑх ҫук.

Шухӑшне килте пӗлтерчӗ.
Ашшӗ илтрӗ те ҫакна
Севккене хӑртса пӗтерчӗ,
Ҫук, ямарӗ яхӑна:

- Йӗмсӗр хӗр. Тӑлӑхскерӗн
Ашшӗ те ҫук, амӑш те.
Ни тупри ҫук ӑнманскерӗн,
Килӗшмест мана пӗртте.

Ун пирки ан уҫ ҫӑвар та:
Тупнӑ эп тупраллине.
Эп сана илсе паратӑп
Туканаш мӑрса хӗрне.

Ай, ытла та тарӑхтарчӗ
Ашшӗ хӑйӗн ывӑлне.
Асилсе умне кӑларчӗ
Тутирек Севкке сӑнне.

Хĕр пике Севкке илемлĕ
Пиçсе çитнĕ çырла пек.
Ун çинчен куçна илеймĕн,
Тыткăнлать хӳхĕмлĕхпе.

Мăшăр куçĕ - икĕ çăлтăр –
Тек сапать хăй çутине.
Юратмасăр епле чăттăр
Яш чĕри çак пикене.

Пĕвĕ чăн та шурă хурăн,
Юмахри хĕр, пирĕшти.
Качча ил те савса пурăн,
Сасси чĕвĕл-чĕвĕлти.

Вăл хастар - ĕçе тухсассăн,
Ячĕ-сумĕ ял çинче.
Ир те каç сывлать хĕр ассăн –
Тутирек ун чĕринче.

Таврари пур чăваш ялĕ
Пăхăнать Туканаша –
Мăрсана – ун хаярĕ-халĕ
Паллă мĕнпур чăваша.

Халăхран ясак пухсассăн,
Мăрсана парать Армет.
Туканаш, килес пулсассăн,
Кашнинчех кунта кĕрет.

Ак паян та килсе çитрĕ
Туканаш хăй свитипе.
Кĕчĕ, малалла вăл иртрĕ,
Ларчĕç салтаксем ретпе.

Кил хуçи тӳрех ăнкарчĕ:
Пăхмалла хăнасене.
Ак шăрттан та çу кăларчĕ,
Ăсса кĕчĕ сим-пылне.

Хăналать пит тăрăшуллăн
Килнĕ çынсене Армет.
Калаçать япшар та çуллăн –
Пурăнма Армет пĕлет.

Туканаш мăрса хĕрелчĕ
Кăрчама ĕçе-ĕçе.
- Армет тусăм, сан пĕлесчĕ
Ĕмĕте, умри ĕçе.

Чăннипе сана калас-и? -
Эп шутлатăп авланма.
Арăм çук, - сывларĕ ассăн, -
Вилчĕ, тунсăх пурăнма.

Çак ялта эп пĕр хĕр куртăм,
Кăшт калаçрăм, вăл Севкке.
Питĕ хӳхĕм, манăн туртăм
Ун енче – эх, еплешке!

- Çамрăк вăл, тата, калас-тăк,
Чухăн хĕр, тупри те çук.
Юрĕ, юрĕ. Тавлашмастăп, -
Кил хуçи калать тăрук, -

Вăл асилчĕ Тутирекĕн
Ыйтăвне. – Аван, аван, -
Сирĕлчĕ чунри сивлекĕ, -
Пулăшăп май пур таран.

- Çамрăк тетĕн, çамрăк пултăр,
Çамрăкки вăл пит аван.
Манпала ача та тутăр,
Ваттине епле саван?

Чухăн тетĕн-ха... Туприйĕ
Хамăн та вăл мăй таран.
Таврара çук ман пеккийĕ
Эпĕ вĕт çĕрме пуян.

Севккене эп тумлантарăп.
Ылтăн-кĕмĕл ун çинче
Çиçсе тăрĕ ярăм-ярăм.
Хĕвел кулĕ питĕнче.

Юратушăн,
Савăшушăн
Пурăнас пулать, тăван!.. –
Шăппăн ларчĕ те пĕр хушă
Мăрса тăчĕ вырăнтан.

- Севккене илме килетпĕр
Паян мар...ыран... Çĕрле... -
Тухса кайрĕç ĕптĕр-кептĕр
Килнĕ салтаксем пĕрле.

Тутирек çакна йăлт илтрĕ
Кăшт уçса пӳрт алăкне.
Каччă - çисĕм. Хăвăрт çитрĕ,
Ăнлантарчĕ Севккене:

- Кайăпăр, çапах тупатпăр
Хамăр кĕтнĕ телее.
Пулмалла халь вăштăр-ваштăр,
Хăвăрт хатĕрленмелле.

Тӳперен пăхать çут уйăх,
Таврана вăл асамлать.
Темĕн анлăш çăлтăр уйĕ -
Çăлтăр витĕр çул выртать.

Лашасем çинче ларaççĕ
Севккепе яш Тутирек.
Пуç сулса, ав, ăсатаççĕ
Шурă хурăн та тирек.

«Пихампар, телей парсамччĕ,
Усала сир, пӳлĕхçĕ.
Юлччăрах мăрса, алманçă», -
Çĕр сассийĕ илтĕнчĕ.

Çӳлелле кĕçех çĕкленчĕç
Лашасем – янаварсем.
Темĕнле вăй туртса илчĕ,
Пур тĕнчен хăвачĕсем.

Тӳпере пит ирĕк, çуккă
Мăрсасем, алманçăсем.
Çăлтăр пахчине те туххăм
Савнипе куран çитсе.

Ярăнса вĕçет яш мăшăр
Малалла та малалла.
Чунсенче хаваслă, ăшă,
Çут телей тупăнмаллах!

Уйăх савăнса сăнарĕ
Çывăхри хăнасене,
Вĕсене канма каларĕ,
Чĕнсе илчĕ хăй патне.

Пинеслу – çут Уйăх хĕрĕ -
Кĕвентеллĕ сар пике –
Сĕнчĕ шыв: Ĕçсемĕр, терĕ, -
Шывĕ вăй парать иккен...

Ывăнни те иртсе кайрĕ -
Çамрăксем каллех çулра.
Алтăр çăлтăр та пуç тайрĕ,
Саламларĕ кăмăлран.

Сисĕнмесĕр вăхăт иртрĕ,
Канăр, канăр çăлтăрсем.
Уйăх, эс те кан...
Ир çитрĕ.
Таврара халь çĕн сăнсем.

«Пихампар, телей парсамччĕ,
Усала сир пӳлĕхçĕ.
Юлчĕçех мăрса, алманçă», -
Çĕр сассийĕ илтĕнчĕ.

Аяла кĕç вирхĕнтерчĕç
Лашасем – янаварсем.
Темĕнле вăй туртса илчĕ,
Пур тĕнчен хăвачĕсем.

Хир, вăрман та, Шăнкăртам та
Севккепе Тутиреке
Кăмăллăн та тараватлăн
Йышăнчĕç ĕмĕрлĕхе.

Питĕ чаплă туй та турĕç:
Вăрман сĕнчĕ сим-пылне,
Хирĕ пачĕ çăкăрне,
Шăнкăртам янратрĕ юрă.

Мăшăрта телей йăл кулчĕ.
Юратуллă çемьере
Ачисем ӳссе çын пулчĕç,
Мăнуксем те чиперех.

Ял – Алманчă – никĕсленчĕ
Çак телейлĕ çемьерен.
Вăй илсе пырса çĕкленчĕ
Пĕтĕм Аслă Пăла ен.

Халĕ паллă çак Алманчă
Районта, республикăра.
Ĕçченсем кунта пурнаççĕ,
Ĕçпеле вĕсем чапра.

Тутарсем те ирçесем,
Вырăссем те чăвашсем
Ăс илме килсех тăраççĕ,
Тав сана, маттур Алманчă!

Йăтăнса пулать тыр-пулă,
Пахча-çимĕç, пĕлĕрсем.
Кунта пурте тăрăшуллă,
Пултаруллă ертÿççем.

Тÿперен пăхать çут уйăх,
Сапалать хăй кĕмĕлне.
Темĕн анлăш çăлтăр уйĕ
Асамлать чун-чĕрене.

Тухрĕ ял ума чиперрĕн,
Чунăм кайрĕ ăшăнса.
Эс пире телей пиллерĕн,
Саламлатăн пуç тайса.

# ТУПМАЛЛИ

Халăхра янăракан сăвăсем.
*В.Давыдов-Анатри* ..... 3

ТУРТĂМ

Сухаçă ..... 6
Чĕнÿ ..... 7
Сада эп юрататăп ..... 8
Чăваш чĕлхи ..... 9
Мĕнле пурнан, çуралнă енĕм? ..... 10
Савнă Чăваш енĕм ..... 11
Ăмăрткайăксем ..... 13
«Ман Шăнкăртам çыранĕсем тавра...» ..... 14
Ялти ĕçчен хĕрарăмсене халалласа ..... 15
Кĕркунне ..... 17
Шурă хĕлĕм, савнă хĕлĕм ..... 18
Тав сăмахĕ ..... 20
«Çăвать шур юр хачисленные, кĕмĕлленнĕ юр...» ..... 21
Хурăнăм ..... 22
Ĕмĕрех пурнать чĕре ..... 23
Эп ăнлантăм çĕр чăнлăхне ..... 24
«Кунта хĕвел пайăркисем...» ..... 25
«Пĕчĕк пÿрт авалхи йывăççем хыçĕнче...» ..... 26
«Пур хĕлĕн лăпкă кун е çил-тăвăл» ..... 27
«Юратап уй-хирĕн ылтăн пуссине» ..... 28
Ача шкула каять ..... 29
Вăрăм ĕмĕр эп сунатăп ..... 30
Ĕçĕр хĕвелле çÿле çĕклентĕр ..... 31
Çын хушшинче эс хисепре ..... 32
Пулăрах яланах малта ..... 33
Сана чунтан юратса ..... 34
Ыррине çеç çул парар ..... 35
Халăху сана манмасть ..... 36

Тапса тăрать ăсăр-халăр ........ 38
Парадокс ........ 39


ЧУНРАН

«Шутлатăн пуль: хĕл сиввинче...» ........ 40
«Йăлăхтарчĕ: каç та, ир те...» ........ 40
«Эс çĕн каçсем çĕн шухăшĕ пекех...» ........ 41
«Таврăнать, сăн илет эп çухатнă хаваслăх...» 42
«Макăрсан та пуплем кăмăлтан...» ........ 43
«Ма хăпмасть-ши манран нуши-терчĕ?» ........ 44
«Куллу та санăн сапаланчăк...» ........ 45
«Кантăкран та пăхмĕ уйăх...» ........ 45
«Юрататăп!» - тесе пăшăлтатан...» ........ 45
«Çунса пăхаççĕ куçусем çаплах...» ........ 46
«Ятласам, ятла! Шыв çинче те...» ........ 47
«Пăрлă çумăр çусан - ĕнтĕркемĕп...» ........ 47
«Усала ку е ырра...» ........ 48
«Килетĕн – савăнăç кӳретĕн...» ........ 48
«Савăнатăп çавă куншăн...» ........ 48
«Эпир тĕл пулнă ăнсăртран...» ........ 49
«Кун сĕре илемлĕ...» ........ 49
«Эп савăнатăп – эсĕ савăнсан...» ........ 49
«Кăн-кăвак куçăмсенчен...» ........ 50
Кăкăрăм çĕкленчĕ çиле хирĕç ........ 51
Санпа тăсасчĕ ман кун-çулăма ........ 53
Эс ăçта, савниçĕм? ........ 54
«Саватăн-и?» - тесе час-час ыйтаттăн...» ........ 55
Иксĕмĕр ялан пĕрле ........ 56
Юратар пĕр-пĕрне ........ 57
«Эс - ман телейĕмччĕ...» ........ 58
Çăлтăр витĕр çул выртать /Легенда/ ........ 59

**Лидия Алексеевна Ковалюк**
**(Антипова)**

# РОДНИК ЛЮБВИ

Стихи
На чувашском языке

Редактор *Г.Г.Чаржов*

Макет и оформлнение *В.П.Эктель*

Сдано в набор 20.02.2002 г. Подписано к печати 14.05.02.
84 x 108 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Times
Усл.изд.л. Тираж 500 экз. Цена «С».

Издательство «Калем»
Писательского фонда Чувашской Республики «Калем».
428022, г.Чебоксары, ул.П.Лумумбы, 14.
Лицензия ЛР № 030927 Госкомпечати РФ от 10.09.99 г.

Кĕнеке кăларма пулăшнă ырă кăмăллă çынсене чун-чĕререн тав.

Вĕсен хушшинче:

Игнатьев Геннадий Сергеевич - «Чăвашагропромстрой» хупă акционер обществин тĕп директорĕ;

Попов Юрий Николаевич - Патăрьел районĕнчи Алманчăри Ленин ячĕллĕ агрофирма директорĕ;

Петров Герман Аркадьевич - «Чăвашсельхозхимин» Яманчурелĕнчи карьер директорĕ;

Краснов Михаил Николаевич - «Шупашкарстройгаз» хупă акционер обществин тĕп директорĕ;

Мешков Олег Вадимович - Шупашкарти «Букет Чувашии» сăра тăвакан фирмăн тĕп директорĕ;

Вазюков Николай Федорович - усламçă.

Пуçăр çинче телей çăлтăрĕ çунтăр,
ĕçĕрсем ăнса пыччăр!

10 2